# Урок теми:

# Чăваш Республики – манăн Тăван çĕршыв!

**Предмет:** тăван (чăваш) чĕлхе

**Программа ячĕ:** тăван чĕлхене пĕлмен/пачах пĕлмен ачасем валли хатĕрленĕ федераци вĕренӳ программи

**Класс:** 5 класс

**Урок тĕсĕ:** Пултарупа хăнăхава аталантармалли урок

**Урок форми:** вĕренӳ тата ĕç практики

Автор: чăваш чĕлхипе литература вĕрентекенĕ Иванова Л.А.



# Урок эпиграфĕ:



Çĕр-шывăмçăм, Чăваш çĕр-шывĕ!
Кирек ăçта пулсассăн та,
Ман асăмра эс чĕрĕ, сывă,
Пуласчĕ ман та асунта.





# I. Йĕркелӳ ĕçĕ.




***Салам, салам! Мĕнле пурăнан?***

***Салам, салам! Мĕнле пурăнан?***

***Лайăх! Чаплă! Питĕ аван!***

# Фонетика зарядки

***тӑв- тӑв-тӑван***

***тӑван «родной»- диван (мебель)***

***тӑл- тӑл - Атӑл***

***Атӑл «Волга»-баттл (битва, бой)***

***рӑ-рӑ- шурӑ***

***шурӑ «белый»-Шура (имя девочки)***

***лӑк-лӑк-палӑк***

***палӑк «памятник»- аналог (сходство)***

# Çанталăк çинчен

























**II. Вĕренӳ ĕçне сăлтавлани: унпа ăçта, хăçан усă курма пултарнине калани.**
















# ТĂВАН ÇĔРШЫВ

**II. Вĕренӳ ĕçне сăлтавлани: унпа ăçта, хăçан усă курма пултарнине калани.**

# ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИ



# МАНĂН ТĂВАН ÇĔРШЫВ

# III. Кирлӗ хӑнӑхусене ҫивӗчлетни, пӗлӗв... тӳрлетӳсем кӗртни

1 **Раççей**

| | |
|---|---|
| Россия | река |
| страна | поле |

2 **тӗп хула**

| | |
|---|---|
| улица | город |
| столица | море |

3 никĕсленĕ

| | |
|---|---|
| построили | перенесли |
| сделали | основали |

4 халăх

| | |
|---|---|
| город | народ |
| родной | столица |

5 тăван

| | |
|---|---|
| любимый | далекий |
| родной | чужой |

# III. Кирлĕ хăнăхусене çивĕчлетни, пĕлĕве тӳрлетӳсем кĕртни

## Чăваш Республики

Эпĕ Чăваш Республикинче пурăнатăп. Вăл Раççейре вырнаçнă. Республикăн тĕп хули – Шупашкар. Ăна 1469 çулта никĕсленĕ. Чăваш Республикинче тăхăр хула: Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар, Çĕмĕрле, Улатăр, Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпӳ, Канаш, Етĕрне, Куславкка.




Республикăра тĕрлĕ халăх пурăнать: чăвашсем, вырăссем, тутарсем тата ыттисем те. Халăхсем пĕр-пĕрин хушшинче туслă пурăнаççĕ.

Чăваш Республикин патшалăх символĕсем пур: герб, ялав тата гимн.

Пирĕн республикăра вăрман нумай. Унта тĕрлĕ йывăç, тĕрлĕ çырла, тĕрлĕ чечек, тĕрлĕ кăмпа ӳсет тата тĕрлĕ чĕр чун пурăнать.

Эпĕ тăван республикăна юрататăп. Вăл маншăн чи лайăххи, чи илемли. Пирĕн пурин те ăна юратмалла.

## III. **Кирлĕ хăнăхусене çивĕчлетни, пĕлĕве тӳрлетӳсем кĕртни**

# *Ыйту - хурав*

| Ыйту | Хурав |
| --- | --- |
| 1) Автор ăçта пурăнать? | Шупашкар |
| 2) Чăваш Республики ăçта вырнаçнă? | Чăваш Республикинче |
| 3) Чăваш Республикинче мĕнле халăх çыннисем пурăнаççĕ? | 9 хула, 21 муниципаллă округ |
| 4) Республикăра миçе хула тата муниципаллă округ? | Атăл хĕрринче |
| 5) Республикăн тĕп хули мĕн ятлă? | чăвашсем, вырăссем, тутарсем тата ыттисем |



# IV.Пĕлĕве тĕслĕх вырăнне усă курни



III. **Кирлӗ хӑнӑхусене ҫивӗчлетни, пӗлӗве тӳрлетӳсем кӗртни**

## ***«Кам маларах?» вӑйӑ***

*Текстра вырӑсла панӑ предложенисен тӳр килӗвне тупмалла*

1) Чебоксары - столица Чувашской Республики.

2) В Чувашской Республике 9 городов.

3) Я свою республику люблю.

4) Нам всем нужно ее любить.

## III. **Кирлĕ хăнăхусене çивĕчлетни, пĕлĕве тӳрлетӳсем кĕртни**

*Текст содержанийĕ тăрăх ӳкерчĕксем туни.*












## III. Кирлĕ хăнăхусене çивĕчлетни, пĕлĕве тӳрлетӳсем кĕртни

*Текст содержанийĕ тăрăх ӳкерчĕксем туни.*
















# III. Кирлӗ хӑнӑхусене ҫивӗчлетни, пӗлӗве тӳрлетӳсем кӗртни

Эпӗ Чӑваш Республикинче пурӑнатӑп.

1. Предложенире местоименисене тупни.
2. Мӗн вӑл местоимени?
3. Местоимени падеж, хисеп тӑрӑх улшӑнни ҫинчен каласа хӑварни.
4. Текстра местоименисем тупни, вӗсен падежне калани.



# III. Кирлӗ хӑнӑхусене ҫивӗчлетни, пӗлӗве тӱрлетӱсем кӗртни

## Местоимени

Япала ятне, паллӑ ятне, хисеп ятне ылмаштаракан пуплев пайне **местоимени** теҫҫӗ.

Местоимени ыйтӑвӗсем япала ячӗнни е паллӑ ячӗнни, хисеп ячӗнни пекех пулаҫҫӗ. Чылай местоименисем вӗҫленеҫҫӗ, хисеп тӑрӑх улшӑнаҫҫӗ. Предложенире местоименисем ытларах чухне подлежащи, дополнении тата определении пулаҫҫӗ. Местоименисем чӗлхере йышлах мар, анчах вӗсемпе час-часах усӑ кураҫҫӗ.

Местоименисем япала ячӗ пекех падеж тарӑх улшӑнаҫҫӗ.

# III. Кирлĕ хăнăхусене çивĕчлетни, пĕлĕве тӳрлетӳсем кĕртни

| | ПĔРРЕЛЛĔ ХИСЕП | | | НУМАЙЛĂ ХИСЕП | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Тĕп падежĕ | эпĕ | эсĕ | вăл | эпир | эсир | вĕсем |
| Камăнлăх падежĕ | манăн | санăн | унăн | пирĕн | сирĕн | вĕсен |
| Пару падежĕ | мана | сана | ăна | пире | сире | вĕсене |
| Вырăн падежĕ | манра | санра | унра | пирĕнте | сирĕнте | вĕсенче |
| Туху падежĕ | манран | санран | унран | пирĕнтен | сирĕнтен | вĕсенчен |
| Пĕрлелĕх падежĕ | манпа | санпа | унпа | пирĕнпе | сирĕнпе | вĕсемпе |
| Çуклăх падежĕ | мансăр | сансăр | унсăр | пирĕнсĕр | сирĕнсĕр | вĕсемсĕр |
| Пирке падежĕ | маншăн | саншăн | уншăн | пирĕншĕн | сирĕншĕн | вĕсемшĕн |

# IV.Пĕлĕве тĕслĕх вырăнне усă курни

## *Местоименисем тупăр*



Шупашкар Атăл Хĕрринче вырнаçнă.

Эпĕ Чăваш Республикинче пурăнатăп.

*Эпир унпа мухтанатпăр.*

***Местоимени***

*Чăваш Республикинче нумай паллă çын çуралнă.*

*Шупашкар – манăн тăван хула.*

*И. Яковлев – чăваш халăхне çутта кăларакан*ĕ.

# V.**Илнĕ пĕлĕвĕн хăнăхăвĕсене тĕслĕх урлă пĕлсе усă курни**

*Местоимenisene кирлĕ формăна лартса çырса илни.*

1) (Эпир) Республика Раççейре вырнаçнă.

2) (Манăн)  Шупашкарта пурăнатăп.

3) Эпир (вăл) юрататпăр.



# Кану саманчĕ



## VI.Илнĕ хăнăхупа пĕлĕве çĕнĕ майпа тĕрĕслесе пăхни

1. Ушкăнпа карточкăсенчи ĕçсене пурнăçласси
2. «Эпир мухтанатпăр!» плакат пуçтарни. Монолог туни.





VI.**Илнĕ хăнăхупа пĕлĕве çĕнĕ майпа тĕрĕслесе пăхни**

1-мĕш карточка «Паллă çынсем»

2-мĕш карточка «Шупашкар палăкĕсем»

3-мĕш карточка «Ӳсен-тăран тĕнчи»

4-мĕш карточка «Хуласем»

5-мĕш карточка «Патшалăх символĕсем»





# VII.**Тĕрĕслев. Пĕлĕве ача хăй тĕллĕн тĕрĕслени**

Тест:

1) Чăваш Республикинче çакăн пек хуласем:

а) Канаш; ă) Çĕнĕ Шупашкар; б) Шупашкар;

2) Чăваш çĕр-шывĕн тĕп хули.

а) Шупашкар; ă) Мускав); в) Куславкка.

3) Чăваш çĕр-шывĕнче … чи йышлă халăх шутланаççĕ.

а) чăвашсем; ă) вырăссем; б) тутарсем;

4) Шупашкар … хĕрринче вырнаçнă.

а) Хура тинĕс; ă) Çавал; б) Атăл;

5) Чăваш çĕр-шывĕ - … .

а) илемлĕ; ă) хăтлă; б) тарават;



# VIII.Урок пĕтĕмлетĕвĕ. Рефлекси



# Килте тумалли ĕç

*Пĕр ĕçе суйласа илме сĕнни:*

- 1. „Чăваш Республикин пуянлăхĕ“ темăпа ӳкерчĕк тăвăр.
- 2. Кĕнекери 148-мĕш стр. 7-мĕш хăнăхтарăва пурнăçлăр.
- 3. Чăваш Республики паллă вырăнсем çинчен каласа пама хатĕрленĕр.


МАТТУРСЕМ!
МОЛОДЦЫ!

**Сывă пулăр, сывă пулăр,**
**Яланах хаваслă пулăр,**
**Яланах телейлĕ пулăр,**
**Яланах илемлĕ пулăр,**
**Сывă пулăр, сывă пулăр.**